27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 НОЯБРЬ, 1 ЮНКУН 216(6711) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 27 çул çитнĕ тĕле ВКП(б) Центральный Комитечĕ ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕМ

1. Пирĕн çĕршыва империалистсен влаçне сирпĕтсе янăранпа тата Совет Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхĕне никама пăхăнманлăхĕн никĕсĕ, халăхсен хушшинчи мирĕн тĕрекне туса хунă Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни сывă пултăр!

2. Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем! Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене пирĕн Тăван çĕршывран сирпĕтсе кăларчĕ. Сывă пултăр пирĕн ирĕклĕ Совет Çĕршывĕ! Сывă пултăр паттăр Хĕрлĕ Çар — ирĕке кăларакан Çар!

3. Гитлерла захватчиксене Германи территорийĕнче аркатса пыракан паттăр Хĕрлĕ Çар сывă пултăр! Аслă Совет державин воинĕсем! Малалла—Хĕвеланăçнелле! Фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнче вĕлерер!

4. Пирĕн хуласемпе ялсене çаратса тата пусе пĕтернишĕн, хĕрарăмсемпе ачасене пусмăрланăшăн, совет çыннисене вĕлернĕшĕн тата нимĕçсен чуралăхне хăваласа кайнăшăн фашистла нимĕç ирсĕрĕсене тавăрар! Усал ĕçсем тăвакан фашистсене тавăру тата вилĕм!

5. Этемлĕхĕн чи усал тăшманĕсене — фашистла нимĕç захватчикĕсене — Англипе Совет Союзĕн тата Американ боевой союзĕ çĕнтересси сывă пултăр! Пĕрлешнĕ нацисен мĕнпур вăйĕпе хăватне гитлерла Германие часрах аркатса тăкас ĕçе парар! Фашистла çынçиенсен вăрă-хурахла йăвине тустарар, пĕтĕм тĕнчери халăхсен хушшинче çирĕп мир туса хурар!

6. Хĕвеланăç Европăра гитлерла йытăкĕтĕвĕсене аркатакан Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен паттăр çарĕсене салам! Тинĕс çинчи фашистла вăрă-хурахсене хирĕç кĕрешекен Англипе Америкăн хăстарлă морякĕсене салам!

7. Югослави халăхне салам! Сывă пултăр Югослави Халăхĕн паттăр Ирĕклĕх Çарĕ, Хĕрлĕ Çарпа алла-аллăн тытăнса кĕрешсе, хăйĕн Тăван çĕршывне нимĕç пусмăрçисенчен ирĕке кăларакан пыраскер!

8. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен поляк халăхне салам! Польша патриочĕсем! Этем курайман нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах аркатса тăкмашкăн хăвăра пĕтĕм вăйăра парăр! Хĕрлĕ Çарпа Польша çарне — пĕтĕм вăйпа пулăшăр! Сывă пулччăр Польша çарĕн паттăр салтакĕсемпе офицерĕсем!

9. Союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Франци Германи пусмăрĕнчен ирĕке кăларса çитерекен француз халăхне салам! Франци «Нормандия» ятлă авиаци чăсĕн паттăр летчикĕсене, совет летчикĕсемпе пĕрле фашистла нимĕç ирсĕрĕсене аркатса тăкакан, боевой салам!

10. Фашистла нимĕç ирсĕрĕсене хирĕç кĕрешекен Чехословаки халăхне салам! Чехословаки патриочĕсем! Хăвăрăн Тăван çĕршыва гитлерла захватчиксенчен ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара пулăшма пĕтĕм вăйпа парăр! Фашистла нимĕç пусмăрçисене хирĕç Хĕрлĕ Çарпа пĕрле кĕрешекен Чехословаки корпусĕн салтакĕсемпе офицерĕсене боевой салам!

11. Гитлерла империализмна хирĕç кĕрешекен Европа халăхĕсене салам! Фашистла нимĕç пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă Европăри çĕршывсен патриочĕсем! Фашистла пусмăрçăсене ирĕке кăларнашкăн кĕрешме çĕкленĕр! Гитлерла тирани тĕп пултăр!

12. Тăван славянсем! Пĕтĕм вăя нимĕç захватчикĕсене — славянствăн виллĕмле тăшманĕсене — аркатса тăкас ĕçе парăр! Гитлерла тиранне пĕтерсе тăкассишĕн кĕрешекен славянсен халăхĕсен союзĕ сывă пултăр!

13. Хĕрлĕ Çар воинĕсем! Сире, ирĕке кăларакансене, нимĕçсен каторгинче хытă асапланакан темиçе миллион совет çыннисем кĕтеççĕ. Хамăрăн пиччесемпе аппасене фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларар!

14. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Хăвăрăн çапăçу ăсталăхне пĕр чарăнмасăр лайăхлатса пырăр, хамăрăн калама çук лайăх çапăçу техникине туллин усă курăр, тăшман çарĕсене пĕтĕмĕшлех аркатса тăкиччен хыçа-пыра çапăр!

15. Хĕрлĕ Çарăн пехотинецĕсем! Тăшман оборонине пултаруллăн çĕмĕрĕр, наступлени ăнăçăне çирĕплетсе, малалла аталантарса тăрăр, нимĕç захватчикĕсене çавăра-çавăра илсе, пĕтерсе пырăр! Сывă пулччăр совет пехотинецĕсем!

16. Хĕрлĕ Çарăн артиллеристĕсемпе минометчикĕсем! Хăватлă тата тĕл персе, тăшманăн оборонине ăнăçлă çĕмĕрме пулăшăр! Пирĕн наступлени туса пыракан пехотăна çул уçса парăр, тăшманăн çыннисемпе çапăçу техникине пĕтерсе пырăр! Пехотăпа тата танксемпе çыхăнса кĕрешессине лайăхлатса пырăр! Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн артиллеристĕсемпе минометчикĕсем!

17. Хĕрлĕ Çарăн танкисчĕсем! Тăшмана вакласа тăкăр, ăна хыçранах хăваласа пырăр! Пĕлсе хăюллă маневрсем туса, тăшманăн тылне тата-тата кĕрĕр, тăшман çарĕсене хаялла чакмалли çулĕсене тата-тата пăрахăр, нимĕç захватчикĕсене пĕтере-пĕтере тăкăр! Сывă пулччăр совет танкисчĕсем!

18. Совет летчикĕсем — пирĕн Тăван çĕршывăн соколĕсем! Тăшмана çĕр çинче те, сывлăшра та, тинĕс çинче те пĕр шелсĕр пĕтерсе пырăр! Сывă пулччăр совет летчикĕсем!

19. Хĕрлĕ Çарăн кавалеристĕсем! Тăшман çарĕсене пирĕн хăвала пырăр, тăшман речĕсем хушшине хăюллăн та тăтăклăн шăтара-шăтара кĕрĕр, унăн фланкĕсене çавăра-çавăра илĕр, тăшман тылĕсене хăюллăн кĕре-кĕре кайăр, фашистла нимĕç çĕлен-калтăксене çавăра илсе, пĕтерсе пырăр! Сывă пулччăр совет кавалеристĕсем!

20. Тинĕс-Çар флочĕн краснофлотецĕсемпе офицерĕсем! Тăшмана тинĕсри çулсенче пыра-пыра çапăр! Тăшманăн карапĕсемпе транспорчĕсене шыва путарăр, тинĕссене гитлерла тасамарлăхран тасатăр! Гитлерла захватчиксене тинĕс çинче те çĕр çинче те пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырăр! Сывă пулччăр совет тинĕс-çар морякĕсем!

21. Хĕрлĕ Çарăн связисчĕсем! Лайăх çыхăну—çапăçăва çĕнтерсе илмелли условисенчен пĕри пулса тăрать. Хĕрлĕ Çарти çыхăну ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пырăр, унăн çапăçусенчи ăнăçлăхне условисем туса парăр! Сывă пулччăр совет связисчĕсем!

22. Хĕрлĕ Çарăн разведчикĕсем! Разведка çарăн куçĕсемпе хăлхисем пулса тăнине асра тытăр. Тăшман тăракан вырăна хăюллăн кĕре-кĕре кайăр! Тăшманăн шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене вăхăтра палăртăр, тăшмана шанчăклăн çапма пирĕн çарсене пулăшăр! Сывă пулччăр совет разведчикĕсем!

23. Сывă пулччăр пирĕн чапла пограничникĕсем — Совет Союзĕн чиккисене шанчăклăн хӳтĕлесе тăракансем!

24. Инженери çарĕсен боецĕсемпе офицерĕсем! Тăшманăн укрепленийĕсене ăнăçлăн штурмлама, юханшывсем урлă, мина хирĕсем урлă тата çӳреме кансĕр вырăнсем урлă каçма, наступлени ăнăçне çирĕплетсе малалла аталантарма пулăшса пырăр! Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн инженери çарĕсен боецĕсемпе офицерĕсем!

25. Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем! Советăн аманнă воинĕсен пурнăçне çăлса хăварассишĕн тата вĕсене çĕнĕрен строя таратассишĕн хăвăра-хăвăр шеллемесĕр кĕрешĕр! Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем!

26. Войсксен тылĕнчи работникĕсем! Хĕрлĕ Çарăн автомобилисчĕсемпе дорожникĕсем! Хĕрлĕ Çара çапăçу техникине, боеприпассем, снаряжени тата апат-çимĕç вăхăтра илсе çитерсе тăрăр! Сывă пулччăр войсксен тылĕнчи работникĕсем! Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн автомобилисчĕсемпе дорожникĕсем!

27. Совет Союзĕн Геройĕсене тата Социализмлă Ĕç Геройĕсене—пирĕн Тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене—мухтав!

28. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшасси мĕнпур совет патриочĕсен таса тивĕçĕ пулса тăрать. Хамăр Тăван çĕршыва ирĕке кăларакансен çемьисемшĕн пурте тăрăшар!

29. Хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса кăларакан предприятисенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Винтовкăсем, автоматсем, пулеметсем, минометсем, тупăсем, снарядсем, патронсем тата минăсем ытларах туса кăларăр! Çапăçу продукцийĕн пахалăхне пĕрмаях лайăхлатса пырăр! Çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем туса кăларас ĕçе вĕренсе алла илĕр! Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ валли!

30. Танксем тăвакан заводсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çар валли танксем ытларах тăвăр! Çĕнĕ йышши çапăçу машинисем тăвас ĕçе ăнăçлăн вĕренсе алла илĕр! Лайăх танксем мĕн чухлĕ нумайрах пулĕç—тăшмана çĕнтерес сехет те çавăн чухлĕ çывăхарĕ!

31. Авиаци завочĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Совет самолечĕсене пĕр чарăнмасăр лайăхлатса пырăр! Хĕрлĕ Çара истребительсем, штурмовиксем, бомбардировщиксем ытларах парса тăрăр!

32. Нефть промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Нефть ытларах кăларăр! Фронтпа çĕршыва горючи ытларах парар!

33. Çĕркăмрăк промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Транспорт тата фабрикăсемпе заводсем пĕр чăрмавсăр ĕçлесси сирĕнтен килет. Çĕркăмрăк ытларах кăларăр, фронтпа тыла кирлĕ чухлĕ топливо парса тăрăр!

34. Металлурги завочĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Танксем, самолетсем, тупăсем, пулеметсем, снарядсем тума металл ытларах парса тăрăр! Çĕршыври халăх хуçалăхĕ валли металл ытларах парăр!

35. Мотор тăвакан промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хальхи вăрçă—моторсен вăрçи пулса тăрать. Самолетсем, танксем, автомобильсем, карапсем валли моторсем тăвассине ӳстерсе пырăр!

36. Станоксем тăвакан заводсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Станоксем туни пирĕн çĕршыва техникăпа хĕçпăшаллантармалли чи паха база пулса тăнине асра тытăр. Станоксем туса кăларассине пĕр чарăнмасăр ӳстерсе пырăр! Çĕнĕрен тăвакан тата юсаса хута яракан заводсене часрах оборудовани тупса вырăнаçтарма пулăшăр!

37. Строительствăри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Васкавлă меслетсемпе çĕнĕ домнăсем, мартенсем, шахтăсем, электростанцисем тата заводсем тăва-тăва лартăр! Нимĕç захватчикĕсем ишнĕ хуласене, промышленность предприятийĕсене тата пурăнмалли çуртсене хăвăртрах юсаса лартăр!

38. Электростанцисенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Çар промышленноçне пĕр чăрмавсăр ĕçлемелле тăвăр! Фашистла нимĕç ирсĕрĕсем ишсе хăварнă электростанцисене часрах юсаса хута ярăр! Энерги памалли хăватсене ӳстерсе пырăр!

39. Пир-авăр тата çăмăл промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырăр, Хĕрлĕ Çар валли тумтирсем тата халăх валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине кунран-кун ӳстерсе пырăр!

40. Вырăнти промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Вырăнти ресурссемпе усă курас ĕçре ытларах пуçарулăх кăтартăр, халăхпа Хĕрлĕ Çар валли продукци туса кăларассине ӳстерсе пырăр!

41. Апат-çимĕç промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çарпа халăх валли апат-çимĕç туса кăларассине ӳстерсе пырăр!

42. Совет железнодорожникĕсем! Хăвăра-хăвăр шеллемесĕр тата тикĕс ĕçлесе, Хĕрлĕ Çарăн наступленине ăнăçуллă тума пулăшăр! Çарсем ларса пыракан тата çар хатĕрĕсемпе халăх хуçалăхĕ валли кирлĕ хатĕрсем тиенĕ поездсене хăвăрт çӳретессине организацилĕр! Чугун çулсем çинче çарти пек дисциплинăна ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетсе пырăр! Нимĕçсем аркатса хăварнă чугун çулсемпе сооруженисене хăвăртрах юсаса хута ярăр!

43. Тинĕс флочĕпе юханшыв флочĕн работникĕсем! Флота тата портсемпе пристаньсене пĕр чăрмавсăр тикĕс ĕçлеттерĕр! Фронтпа тыла грузсем пĕр чарăнмасăр çитерсе тăрăр! Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă бассейнсенчи тинĕс флочĕпе юханшыв флотне, порт сооруженийĕсене тата пристаньсен хуçалăхне часрах юсаса хута ярăр!

44. Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем! Фронтпа çĕршыва ытларах апат-çимĕç тата промышленноçа ытларах чĕртавар парса тăрăр! Государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн тата планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва анлăрах сарса ярăр! Сывă пулччăр совет хресченĕсем!

45. Колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, зоотехниксемпе ветеринарсем! Выльăх-чĕрлĕхсен йышне тата ытларах ӳстерер, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварар! Выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне хăпартар! Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах парса тăрар!

46. Совет интеллигенцийĕ! Инженерсемпе техниксем, агрономсем, учительсем, врачсем, наукăпа искусство тата литература работникĕсем! Совет предприятийĕсемпе учрежденийĕсенчи служащисем! Рабочисемпе колхозниксене хамăрăн халăх хуçалăхне малалла ӳстерсе хăпартса пыма пулăшăр! Совет наукине, техникине тата культурине малалла аталантарса пырăр! Сывă пултăр совет интеллигенцийĕ!

47. Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи ĕççыннисем! Гитлерла вăрă-хурахсем çĕмĕрсе ишсе хăварнă хуласемпе ялсене, промышленноçа, транспорта, çыхăнăва, ялхуçалăхне тата культурăпа йăла учрежденийĕсене хăвăртрах юсаса ура çине тăратăр! Хăвăра ирĕке кăларнă Хĕрлĕ Çара кунсерен вăйлăрах та вăйлăрах пулăшса пырăр!

48. Совет хĕрарăмĕсем! Производствăри специальноçсене тĕплĕн вĕренсе алла илĕр, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырăр, сывлăшран тапăнассинчен тата химилле тапăнуран сыхланас ĕçе, санитари ĕçне, çыхăну ĕçне вĕренĕр! Пĕтĕм вăя нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме парар! Сывă пулччăр совет хĕрарăмĕсем!

49. Совет çамрăкĕсемпе хĕрĕсем! Фронта пулăшас тесе вăя шеллемесĕр ĕçлĕр, производство техникине тата çар ĕçне вĕренсе алла илĕр, ĕç дисциплинин чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса пырăр! Сывă пулччăр совет çамрăкĕсем!

50. Коммунистсемпе комсомолецсем! Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешекенсен малти ретĕнче пулăр!

51. Сывă пултăр хăватлă Совет Союзĕ, пирĕн Тăван çĕршыври халăхсен туслăхĕн, телейĕн тата чапĕн шанчăклă тĕрекĕ! Сывă пултăр пирĕн Советлă Тăван çĕршыв!

52. Сывă пултăр пирĕн çĕршыври халăхсен никам пăсайми туслăхĕ!

53. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленинпа Сталин партийĕ — фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве хавхалантарса, организацилесе пыраканĕ!

54. Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе, гитлерла Германие пĕтĕмпех аркатса тăкма, пирĕн тĕрĕслĕхлĕ ĕçе пĕтĕмпех çиеле кăларма — малалла!

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ.

Гектартан 30 центнер кок-сагыз тымарĕ туса илессишĕн!

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомне

Красноармейски районри „Красный Борденер" колхоз членĕсем янă çыру

Пирĕн Красноармейски районри «Красный Борденер» колхоз кок-сагыз акса тума 1944 çулта кăна тытăнчĕ. Ку таринччен республикăри колхозсем акнă хыççăн иккĕмĕш çулĕнче кăна тухăçлă кок-сагыз туса илнĕ. Эпир хамăр умма пĕр çулхи плантаци çинчен пирвайхи çулах гектартан 20-шер центнер кок-сагыз тымарĕ туса илес задача лартрăмăр. Çак задачăна пурнăçа кĕртес шутпа, пирĕн колхоз кок-сагыз акса тăвас ĕçре çĕнĕ майпа — кок-сагыз калчисене уйрăм шăтăксене чавса лартас майпа усă курчĕ. Пĕтĕмпе эпир 6 гектар кок-сагыз лартрăмăр. Ку хисепрен 5 гектар çинчи кок-сагыз тымарĕсене кăçал пухса кĕртрĕмĕр, кок-сагыз тымарĕ пурĕ 10.111 килограмм тухрĕ. Çапла вара, вăтамран шутласан, кашни гектартан 20 центнер та 22 килограмм кок-сагыз тымарĕ пухса илтĕмĕр, уйрăм участоксенчен 26-шар центнер тухрĕ.

Оборона тĕлĕшĕнчен питех те кирлĕ çак культурăна — кок-сагыза 1945 çулта та калчисене уйрăм шăтăксене лартса ӳстерме йышăнтăмăр.

Пирĕн колхоз 1945 çулта кок-сагыза пĕр çуллăха акнă çĕртенех гектартан 30-шар центнер туса илме, çапла вара 6 гектар çинчен промышленность валли 180 центнер кок-сагыз тымарĕ туса пама пулчĕ.

Хамăрăн обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесе, эпир кок-сагыз акмалли участока 216 тонна тислĕк турттартăмăр, ăна сапаласа 25 сантиметр тарăнĕш сухаларăмăр. Хĕллехи питомник валли эпир кок-сагыз калчисене халĕ, кĕркунне, акса хăваратпăр.

Колхоз председателĕ М. ПЕТРОВ.
Комсомол организацийĕн секретарĕ ВИКТОРОВА.
Кок-сагыз акса тăвакан бригадăн бригадирĕ ПЕТРОВА.
Звеноводсем: А. ЕГОРОВА, О. ТРОФИМОВА, Н. ТРОФИМОВА.

Красноармейски районри „Красный Борденер" колхоз председательне М. Петров юлташа Комсомол организацин секретарьне Викторова юлташа Кок-сагыз акса тăвакан бригадăн бригадирне Петрова юлташа Звеноводсене А. Егорова, О. Трофимова, Н. Трофимова юлташсене

Эсир, Сталин юлташ кăçалхи майăн 1-мĕшĕнче кăларнă приказ çине ответлесе, тухăçлă кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе хăвăр йышăннă обязательствăна чыслăн пурнăça кĕртрĕр, пĕр çулхи плантацирен кашни гектартан 20,22-шер центнер, уйрăм участоксенчен 26-шар центнер таран кок-сагыз тымарĕ пухса илтĕр.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ Сире, кок-сагыз тымарĕ тухăçлă туса илес ĕçри мастерсене, саламласа, малашнехи ĕçре çитĕнӳсем тума, çапла вара çĕршыв валли каучук ытларах туса пама ырă сунаççĕ.

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ,

И. ЧАРЫКОВ,
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИЗНĂЙ СВОДКĂ

Октябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем Чехословаки çĕрĕнче, УЖГОРОД хулинчен çурçĕртерехре, малалла тапăнса пынă, ЧАБАЛОВЦЕ, ОЛЬШИНОВ, ВИЛАГ, ПАРИГУЗОВЦЕ, ГРИВИШТЕ, ХОНЬКОВЦЕ, ТИБАВА ятлă ялсене туртса илнĕ. Тĕрĕсрех даннăйсем тăрăх, Чехословаки çĕрĕнче кĕрешекен УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем октябрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа 29-мĕшне çитиччен тăшманăн 10.160 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çапла вара, УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем октябрĕн 20-мĕшĕпе 29-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсемпе венгерсен 21.390 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Венгри çĕрĕнче, САТУ-МАРЕ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, ВАШАРОШНАМЕНЬ ятлă узловой чугун çул станцине тата ДЬЮРЕ, ВАРШАКИЛК, НЬИР-МАДА, РОХОД, ФЕЙЕРТО ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 72 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 37 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Ужгород хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Ку районра Магура тата Бескид ту хырçисем тăсăлса выртаççĕ. Çав ту аяккисенче нимĕçсемпе венгерсем укрепленисем туса хунă. Оборона позицийĕсем патне пымалли вырăнсенче минăсем лартса тултарнă, çулсене сирпĕнтерсе янă е купаласа картласа пĕтернĕ. Вăйлă çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем тăшман оборонине темиçе тĕлте татнă та Магура тата Бескид ту хырçисем урлă каçса кайнă. Тусем çинчи улăхсене тухса, совет чаçĕсем тăшманăн тĕреклетнĕ чылай пункчĕсене, вăл шутра Вилаг ятлă пысăк яла туртса илнĕ. Унти çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальон таран пĕтерсе тăкнă. Пĕр соединени чаçĕсем виçĕ кун хушшинче нимĕçсенчен 20 тупă, 65 миномет, 146 пулемет, 3.685 винтовкăпа автомат, 4 боеприпас склачĕ, 3 паровоз, 50 вагон тата 1.000 лаша ытла тытса илнĕ.

* * *

Венгри çĕрĕнче, Сату-Маре хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă. Паян Вашарошнамень ятлă узловой чугун çул станцине пырса кĕмелли вырăнсенче вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Вашарошнамень станцине мĕнле пулсан та хăй аллинчех тытса хăварма хăтланса, тăшман темиçе хутчен контратакăна кĕре-кĕре кайнă. Совет чаçĕсем тăшмана аякран кайса ăнăçлăн çавăрса илнĕ те, Тисса шывĕ хĕррине хĕстерсе лартнă. Кĕске вăхăт хушши хаярран çапăçса, тăшмана аркатса тăкнă. Нимĕçсемпе венгерсем нумайĕшĕ шыва путса вилнĕ. Пирĕн çарсем тĕрлĕ участоксенче нимĕçсемпе венгерсен 500 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире, Гольдап хулинчен кăнтăртарахра, нимĕçсен пехотипе танкĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Совет боецĕсем нимĕçсене хăйсем патне çывăхах янă та тупăсемпе, пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн пеме пуçланă. Тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ, вара васкасах каялла чакнă. Çапах та нимĕçсем часах тепĕр атака пуçласа янă. Анчах та вĕсене ку хутĕнче те каялла ывăтса янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă, нимĕçсен 14 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине тата 6 бронетранспортерне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Варшава хулипе юнашар ларакан Прагăран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшмана хирĕç тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. Пĕр чаçри подразделенисем тăшмана атакăланă та лайăх позицисем тытса илнĕ. 300 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 6 тупă, 32 пулемет тата 2 боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Польшăн 1-мĕш армийĕн çав районра кĕрешекен подразделенийĕсем гитлеровецсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Германире 16 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ арçынсене пурне те çара илесси çинчен пĕлтернĕ, ун çинчен эпир нумаях пулмасть çырнăччĕ. Гитлеровецсем резервсем хырса пухасшăн, вĕсене фронта ярасшăн. Анчах та пурте пĕлсе тăраççĕ, кунччен чылай маларах нимĕçсен çар влаçĕсем çара кама илме май пуррисене пурне те мобилизациленĕ. Юлашки кунсенче пирĕн боецсем чылай нимĕç салтакĕсене — стариксемпе инвалидсене — тыткăна илнĕ. Нимĕçсен 6-мĕш командинчен тыткăна лекнĕ салтак Франц Геббеха 60 çулта. Вăл çапла каласа кăтартнă: «Мана çара 1944 çулхи май уйăхĕнче илчĕç. Манпа пĕрлех 63 çулти Людвиг Кригер учителе те мобилизацилерĕç».

Нимĕçсен 388-мĕш учебнăй дивизийĕнчи 640-мĕш учебнăй полкăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Рихард Беккер çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн полка нумаях пулмасть çĕнĕрен çынсем хушса пачĕç. Çавăн чухне пынисем хушшинче чиновник пулса ĕçленĕскерсем нумай. Вĕсем пурте нимĕçсем оккупациленĕ совет территорийĕнче тĕрлĕ учрежденисенче ĕçленĕ. Халь çав учрежденисене ним тума çук пирки хупса лартнă. Чиновниксем каялла Германие каясшăн пулнă, анчах та вĕсене пурне те çара илнĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ ватă çынсем, 45 çултан пуçласа 60 çула çитнисем. Вĕсене пурне те пехотнăй чаçсене рядовой салтаксем пулса çапăçма янă, анчах вĕсем çар службинче тăма юрăхсăрри уççăнах курăнса тăрать».

Нимĕçсен 21-мĕш запасри тинĕс батальонĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Эрнст Пауль çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ ĕнте 58 çулта. Иртнĕ пĕрремĕш тĕнчери вăрçăра эпĕ матрос пулса çапăçнă. 1944 çулхи сентябрь уйăхĕнче мана çара илесси çинчен повестка тыттарчĕç. Малтанах эпĕ ку йăнăшпа пулчĕ пулĕ тесе шутларăм. Анчах та мобилизаци пунктне çитсен, эпĕ хам паллакан ватă çынсене нумай тĕл пултăм. Çамрăк, лайăх вĕрентнĕ салтаксем вырăссене хирĕç тăма пултараймарĕç пулать иккен те, пирĕн пек ватăсенчен мĕн кĕтме пулать вара. Германи шанчăксăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ. Путма пуçланă çын улăм пĕрчинчен ярса тытать, теççĕ, Гитлер çĕнĕ мобилизаци пуçласа яни çавăн евĕрлĕ пулса тăрать».

СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔСЕН ЯЧĔПЕ КĂЛАРНĂ ПОЧТА МАРКИСЕМ

СССР Çыхăну Халăх Комиссариачĕ çĕнĕрен икĕ тĕслĕ почта маркисем пичетлесе кăларать. Пĕрин çинче—чапа тухнă летчикăн, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕн Сафонов юлташăн сăнĕ, теприн çинче—Совет Союзĕн Геройĕсен Ковшовăпа Поливановăн сăнĕсем.

«СОВЕТСКАЯ СИБИРЬ» ХАÇАТ 25 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ

Новосибирскра октябрĕн 29-мĕшĕнче Çĕпĕрти «Советская Сибирь» ятлă чи ватă хаçатăн юбилейлă номерĕ тухнă. Çав хаçат 1919 çулта октябрь кунĕсенче тухма пуçланă, ăна пирĕн партин питĕ чаплă деятелĕ Емельян Ярославский ертсе пынă.

(ТАСС).

СССР орденĕсемпе тата медальсемпе наградăлани

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, шоссе çулĕсене тăвас тата пăхса упрас тĕлĕшпе правительство задачисене кăтартуллă пурнăçа кĕртнĕшĕн строительсем, партипе совет работникĕсен тата колхозниксен пысăк ушкăнне СССР орденĕсемпе медальсемпе парса наградăланă.

Наградăланисем хушшинче пирĕн республикăри партипе совет организацийĕсен, çул ĕçне пыракан работникĕсем, çул работникĕсем тата колхозниксем те пур.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ И. М. Чарыков юлташа Ленин орденĕпе наградăланă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ А. М. Матвеев юлташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместителĕ М. И. Ревкин юлташа, ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ А. В. Сомов юлташа тата участок начальникне Л. К. Коломиец юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе: ВКП(б) Чăваш Обкомĕн промышленноçпа транспорт отделĕн заведующин заместителĕ Д. Ф. Дубинин юлташа, ВКП(б) Куславкка райкомĕн секретарĕ Г. М. Крючков юлташа, инженер-капитана Л. Г. Лазутин юлташа, ВКП(б) Çĕрпÿ райкомĕн секретарĕ Д. Я. Митьков юлташа, ВКП(б) Калинино райкомĕн секретарĕ Ф. П. Романов юлташа тата Çĕрпÿ районĕнчи «Первое мая» колхозăн колхозникне Р. И. Романова юлташа «Знак почета» орденĕпе наградăланă.

Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне П. С. Галанова юлташа тата инженера В. В. Шеин юлташа «Ĕçри Хастарлăхшăн» медальпе наградăланă.

Промышленноçăн банкĕн Чăваш республикинчи конторин управляющине А. Г. Григорьев юлташа, шофер П. П. Бачило юлташа, Шăмăршă районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз председательне М. Н. Дубровин юлташа, Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхозăн колхозникне П. К. Кондратьев юлташа, Элĕк районĕнчи «Сутталла» колхозăн председательне У. Н. Нилова юлташа, Сĕнтĕр районĕнчи «Новый путь» колхозăн колхозникне Е. С. Петрова юлташа, Калинино районĕнчи «Чăваш Коммуни» колхозăн колхозникне Е. П. Прокопьев юлташа, Октябрьски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне Н. С. Савельев юлташа, Советски районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне Т. С. Соловьев юлташа, Канаш районĕнчи «Парижская Коммуна» колхозăн колхозникне Е. П. Федорова юлташа «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе наградăланă.

Шупашкар хула Совечĕн сессийĕ

Ĕççыннисен депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн XVII сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшу парасси [illegible] ыйтăва пăхса тухрĕ. [illegible] хула Совечĕн исполкомĕн председателĕн [illegible] Аникин юлташ доклад [illegible].

Докладчик малтанах çар çыннисен [illegible] 4 миллион та 691 пин тенкĕ ытларах [illegible] палăртрĕ. Унсăр пуçне, материалсем, продуктсем [illegible].

[illegible]

[illegible]

Унтан докладчик [illegible].

[illegible]

Сесси [illegible].

Садсене çĕнĕрен чĕртеççĕ

ЕТĔРНЕ. «Правда» колхозра 1940—41 çулсенче пысăк сад ÿссе çитнĕччĕ. Кунта 2 пин ытла улмуççи, чей çырлипе слива йывăççисем 3 пин, хăмла çырли йывăççисем 500 тĕпе яхăн пулнă. Колхоз сачĕ çулсерен 150-шар пин тенкĕ таран тупăш парса татнă.

1941 çулта колхоз сачĕ сивĕпе хăрса пĕтрĕ. Халĕ кунта татах сад ĕрчетеççĕ. 1942 çулхи кĕркунне пĕр гектар çине çырла йывăççисем тата 140 тĕп улмуççи лартнă. Кунсăр пуçне виктори. улмуççисем хушшине хĕрлĕ хурлăхан йывăççисем лартнă.

Сад йĕри-тавра карта тытса тухнă. Кăçал çуркунне сад питĕ илемлĕн çурăлчĕ. Сад каллех чĕрĕлчĕ. Колхоз кăçал садри çимĕçсенчен 50 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Колхозниксем нумаях пулмасть сад йĕри-тавра акаци йывăççисем тата 40 тĕп улмуççи лартрĕç. Çитес çул колхоз садран каллех пысăк тупăш илме пултарать.

В. ЛАЗАРЕВ.

Хĕрлĕ Çар фондне—çĕрулмипе пахча-çимĕç

КУКЕÇ, октябрĕн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 550 тонна çĕрулми пама пулчĕç. Нумай колхозсем çĕрулмине турттарма тытăннă ĕнтĕ. Ку ĕç «1-ое Мая», «Красная Звезда», «Çăлту» колхозсенче анăçлă пырать.

* * *

ЕЛЧĔК, октябрĕн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксем Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне планран иртерсе çĕрулмипе пахча-çимĕç пама чĕнсе каланине ырласа йышăнчĕç. Нумай колхозсем çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хатĕрлев пунктне леçме тытăнчĕç. Çапла, «Хунав» колхоз, 720 пăт çĕрулми пама пулнăскер, 370 пăт ытла леçнĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз, 300 центнер пама пулнăскер, тепĕр кунтан пĕтĕмпех турттарса пĕтерет.

Хĕрлĕ Çар фондне панă çĕрулмине «МОПР», «Октябрь» тата ытти колхозсем те хатĕрлев пунктне турттарма тытăннă. Районри колхозсем пĕтĕмпе 400 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç параççĕ.

И. СТЕПАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ, октябрĕн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те Çĕрпÿсен чĕнĕвне хавасланса кĕтсе илчĕç. Колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 500 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç пама пулчĕç. Чылай колхозсем хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртсе çитерессĕ ĕнтĕ. Çапла, «Сеятель» колхоз 65 центнер пама пулнăскер, пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе панă. Çавăн пекех «Страж революции» колхоз 120 центнер, «Искра» колхоз 78 центнер, «Коминтерн» колхоз 85 центнер леçсе панă.

Паянхи куна колхозсем пĕтĕмпе хатĕрлев пунктне 160 тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç леçнĕ.

В. ТРОФИМОВ.

Бригада хăйĕн обязательствине пурнăçларĕ

ТАВАЙ. Ураскассинчи «Еçлĕх çулĕ» колхоз членĕсем Совет Украининчи колхозниксем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне планран иртерсе 800 пăт тырă пама пулчĕç. Колхозниксем, тăрăшса ĕçлесе, Октябрь уявĕччен авăн çапса пĕтерме сăмах пачĕç. Ф. Никифоров юлташăн бригади, авăн çапса пĕтерсе, илнĕ обязательствăна икĕ эрне малтан пурнăçларĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăсем те, Никифоров юлташ бригадин примерĕпе ырми-канми ĕçлесе, уявччен авăн çапса пĕтерме васкаççĕ.

А. НИКОЛАЕВ.

Тырпул

Исментер ялĕ фронтран инçетре. Нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче тунă тискерлĕхсем çинчен кунта радиопа хаçат тăрăх çеç пĕлеççĕ. Таврана пăхатăн та вăрçă çук пек. Пÿртсем те тĕрĕс-тĕкĕлех лараççĕ. Кунта истребительсем, бомбардировщиксем вĕçмен.

Анчах исментерсем вăрçаççĕ. Вĕсем тăшмана тырăпа çапаççĕ. Анчахрах пулнă колхозниксен пухăвĕнче председатель Ф. Чоланов сăмах илсеччĕ. Вăл мĕн вăрçă пуçланнăранпах çак колхоза ертсе пырать. Унăн авторитечĕ пысăк.

Ларакансем хушшинче çĕрĕçĕпе писнĕ хресченсем те, плуг аврине вăрçă вăхăтĕнче кăна тытса пăхнă хĕрарăмсем те, ачасем те, икĕ-виçĕ çул каялла лапталла вылянăскерсем, пулнă. Вĕсем пысăк ыйту сÿтсе-явнă.

— Кунта ытлашши нумаях та каласса тăмалли çук,—тенĕ председатель. — Совет Украининчи хресченсем пĕтĕм Совет Союзĕнчи хресченсене çĕршыва фронт валли тырпул хушса пама чĕнчĕç. Планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă памалла.

Колхозниксем умне çакăн пек картина тухса тăчĕ: Украинăри пурлăха нимĕçсем çаратса пĕтерчĕç. Анчах пысăк йывăрлăх тÿснĕ пулсан та, хресчен çынни алă усса лармасть, колхоз хуçалăхне ура çине тăратать. Колхозниксем хăйсем валли çеç мар, фронт валли те пиншер пăт тырă турĕç. — Пирĕн вĕсенчен мĕншĕн-ха кая юлас?—терĕç исментерсем.

Кăвак шуçăмлах хатĕрлев пунктне тырă лавĕсем тухса кайрĕç. Колхозниксем кĕске вăхăт хушшинчех Хĕрлĕ Çар фондне 86 центнер тырă леçсе пачĕç. Унччен обязательнăй поставка шучĕпе 276 центнер панă.

Халĕ акă колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли пахча-çимĕçсем параççĕ.

— Пирĕн хамăрăн та çăкăр çителĕклĕ пулать,—теççĕ колхозниксем. Колхоз ĕçкунĕ пуçне аванс йĕркипе пĕрер килограмм тĕштырă тата çĕрулми чылай валеçнĕ. Татах 1,5-шер килограмм тĕштырă валеçме шутлаççĕ.

Государство умĕнче колхозăн нимĕнле парăм та çук. Ăш-какая 1945 çулшăн та парса татнă. Колхозниксем çĕршыва фронта çăкăрпа пĕрлех выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем те çителĕклĕ параççĕ.

83 гектар кĕрхи çĕртме туса, плана тултарнă.

Итем çинче ултă лаша вăйлĕ молотилка кунĕн-çĕрĕнех чарăнма пĕлмесĕр шавларĕ. Колхозниксем пĕтĕм йышши культурăсене çапса пĕтерчĕç. Вăрлăх фондне те çителĕклĕ тырă хывса хăварчĕç.

Çăкăр пулать!

Яков СИГАЙ.
«Радио» колхоз, Советски район.

Мария Хозикова бригади

СЕНТЕР. «Первая борозда» колхоз кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе районра малта пыракан колхозсен шутĕнче тăрать. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар хăватлă наступлени туса пынипе хавхаланса, колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕсене нихçан пулман хастарлăхпа туса пычĕç. Бригадăсем, пĕрпĕринпе ăмăртса, хăйсен ĕçĕсене кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа вĕçлессишĕн вăй шеллемесĕр ĕçлерĕç.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тата государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татас тĕлĕшпе иккĕмĕш бригада мала тухрĕ. Ăна Мария Хозикова ертсе пырать. Вăл Оборонăн Государственный Комитечĕн заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçласа пынăшăн 1941 çулта Правительствăн пысăк наградине — Ленин орденне тата Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ.

Мария Хозикова хăйне шанса панă ĕçе яланах вăхăтра та пысăк пахалăхпа туса пырать. Вăл ертсе пыракан бригада кăçал тырпула ытти бригадăсенчен 5—6 кун малтан вырса пĕтерчĕ. Тырă вырма тухсан тепĕр 5 кунтанах колхозниксем авăн çапма, хатĕрлев пунктне тырă леçме тытăннă. Графика яланах вăхăтра тултарса пынă. Бригада планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне 140 пăт тырă леçнĕ. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене те чи малтан пухса кĕртнĕ, государствăна вăхăтра парса татнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн кунта ĕçсен пахалăхĕ татах та ÿснĕ. Бригадăри колхозниксем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, октябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕ. Халĕ, Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн, Хĕрлĕ Çар фондне планран иртерсе çĕрулми тата пахча-çимĕç парас тĕлĕшпе ăмăрту пуçланса кайнă. Ку ĕçре те иккĕмĕш бригада малта пырать.

Хозикова юлташ çав вăхăтрах агитаци ĕçне туса пыма та ĕлкĕрет. Вăл — Ярославка ялсовет исполкомĕн депутачĕ. Уборка вăхăтĕнче вăл, агитаци ĕçне вăйлатса, хăйĕн бригадинчи колхозниксене ĕçе мобилизацилесе пынă. Унăн 4 пиччĕшĕ фронтра çапăçаççĕ. Ĕçчен бригадир хăйшĕн те, фронтри пиччĕшĕсемшĕн те пикенсе ĕçлет.

З. СЕМЕНОВ.

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейи

Ултă кунхи итогсем

Республикăри укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене 1944 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕ тĕлне 39.636 пин тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран билетсен укçине 21.000 пин тенкĕ хывнă. Республикăри пилĕк район — Октябрьски, Вăрмар, Тăвай, Канаш, Çĕрпÿ районĕсем лотерея билечĕсене сарас тата билетсен укçине пухас ĕçе пĕтĕмпех вĕçленĕ.

Лотерея билечĕсене сарас тата билетсен укçине пухас тĕлĕшпе малтанхи пекех Элĕк, Кувакино, Калинино, Етĕрне тата Шăмăршă районĕсем юлса пыраççĕ.

Кашни колхозник билет туянать

ИШЛЕЙ. Колхозсенче лотерея билечĕсене сарас ĕç малалла пырать. Папанин ячĕпе тăракан колхозра билетсем 300 тенкĕрен кая туянакан колхозниксемпе колхозницăсем пачах пулмарĕç. Çав колхозăн председателĕ Алексеева юлташ лотерея билечĕсене 1000 тенкĕлĕх туяннă.

Уйăхри ĕç укçин 30 процентчĕ чухлĕ

Чăвашсен Государство Академи театрĕн работникĕсем лотерея билечĕсене пуртте туянчĕç. Вăтамран илсен, театр коллективĕ билет илме уйăхри ĕçукçин 30 процентчĕ чухлĕ çыраннă.

А. СЕРГЕЕВ.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Çар ĕçне вĕренмелли кабинетсем

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкассинчи вăтам шкулта, Макаçри, Кĕçĕн Ăстакассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче çар ĕçне вĕренме площадкăсемпе кабинетсем тунă. Вĕсенче макетсем, плакатсем тата вĕренÿре кирлĕ ытти хатĕрсем çителĕклĕ таранах пур.

Литературăпа драма, физикăпа хими кружокĕсем

Советски районри Хучашри вăтам шкулта вĕренекенсем литературăпа драма, химипе физикăна вĕренмелли тата шашкă-шахмăт кружокĕсем организацилене. Кашни вĕренекен хăй кăмăллакан кружока хутшăнать. Драма кружокĕ Октябрь уявĕ кунĕсенче «Айдар» пьесăна выляса пама хатĕрленет.

Ухута срокĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ ухута срокĕсене çирĕплетнĕ. Пакшасене 1944 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи февралĕн 15-мĕшне çитиччен, тилĕсене 1944 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕпе 1945 çулхи мартăн 11-мĕшĕ хушшинче, пăсарасемпе мулкачăсене 1944 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕпе 1945 çулхи февралĕн 15-мĕшĕ хушшинче тытма ирĕк панă. Унсăр пуçне 1944—45 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра, 1944 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи февралĕн 15-мĕшне çитиччен сăсарсене, 1944 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи февралĕн 15-мĕшне çитиччен шурă пăсарасене тытма ирĕк панă. Заготживсырьепа тата коопераципе договорсем тунă сунарçăсене ухута вăхăтĕнче предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче ĕçлессинчен хăтараççĕ.

Хĕвелтухăç Прусси

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем темиçе кун ĕнтĕ нимĕçсен çĕрĕ çинче ăнăçлă наступлени туса пыраççĕ. Совет чаçĕсем тăшман укреплениййĕсен йышлă речĕсене çĕмĕре-çĕмĕре татаççĕ, тăшман пехотипе танкĕсен çĕнĕ те çĕнĕ вăйĕсен контратакисене сире-сире яраççĕ, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк сухату тÿстереççĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Хĕвелтухăç Пруссин çĕрне кунсеренех шалтан шалалла кĕрсе пыраççĕ, халăх пурăнакан çĕнĕ те çĕнĕ пунктсене йышăнаççĕ.

Çак кунсенче фронтра малти позицисем патне каякан çулсем çинче машинăсем нумай çÿреççĕ. Çапăçусем пыракан вырăнсене совет танкĕсем, боеприпассем тиенĕ машинăсем, горючи тултарнă автоцистернăсем каяççĕ. Çулсем тăрăх çыхăну тытакан боецсем мотоциклсемпе васкаççĕ.

Совет техникин хĕвеланăçнелле каякан çав юхăмне хирĕç ывăннă, халтан кайнă çынсен ушкăнĕсем пыраççĕ. Вĕсем — фашистсем Германи каторгине ирĕксĕр хăваласа кайнă вырăссем, белоруссем, украинецсем. Вĕсене халь Хĕрлĕ Çарăн наступлени туса пыракан чаçĕсем ирĕке кăларнă.

Ирĕке тухнă çынсем савăнаççĕ, фашистсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăшăн вĕсем красноармеецсемпе офицерсене çав тери хĕрÿллĕн тав тăваççĕ. Горючи тултарма чарăннă танк умне, канма ларнă боецсем патне унта та кунта хăйсен тăван çĕршывне таврăнакан совет çыннисем пырса тăраççĕ. Вĕсем гитлерла каторгăра пусмăр айĕнче мĕнле пурăнни çинчен каласа параççĕ.

Курск облаçĕнчи Шегловск районĕнчи Озерки ялĕнчи Валя Рашупкинăна нимĕçсем 1941 çулхи хĕлле ирĕксĕр Хĕвелтухăç Пруссие илсе кайнă.

— Мана тата ман пек хĕрсене темиçе çĕр çынна пасара илсе тухрĕç те сутма тытăнчĕç, — тесе каласа парать Валя. — Нимĕç помещикĕсем пире пур енчен те пăхатчĕç, алăри мускулсене хыпалатчĕç; урасене пăхатчĕç. — хăйсем умĕнче çын мар, лаша тăнă пекех пăхатчĕç. Мана час илмерĕç, мĕншĕн тесен çул çинче йывăр килнĕ пирки тата нимĕçсем патĕнче выçă пурăннă пирки, эпĕ начарланнăччĕ. Унтан мана пĕр ресторан хуçи илсе ячĕ. Ун патĕнче эпĕ питĕ нумай асап тÿсрĕм. Хуçа ытпă пек тăваймасанах вăл мана хĕнетчĕ, асаплантаратчĕ, мăшкăллатчĕ, е тата полицие илсе каятчĕ, унта вара резина патакпа хĕнетчĕç.

— Мана тата манăн тантăшăмсене ирĕке кăларнăшăн спасибо сире, хаклă боецсем, —тет вăл, пуç тайса.

Брест облаçĕнчи Пружански районри Долучин ялĕнчи белорусс хĕрне Надя Шманкона çавăн пек ытти телейсĕр хĕрсен эшелонĕпе пĕрле нимĕçсем Гольдап хулине, халь Хĕрлĕ Çар тытса илнĕскерне, илсе кайнă.

— Унта пире площаде илсе тухрĕç те, ретĕн-ретĕн тăратса, сутма тытăнчĕç, — каласа парать Надя. — Çав хулара чурасен пасарĕ пулнă. Унта таврари вырăнсенчен нимĕçсемпе нимĕç хĕрарăмĕсем нумай пыратчĕç. Вĕсем пирĕн тавра çÿретчĕç, пире пăха-пăха çавăрăнатчĕç, хаклашатчĕç, ытлашши тÿлессинчен хăратчĕç курăнать...

Мана Будвейче ялĕнчи кулак Отто Адлефер ятлăскер пилĕк марка тÿлесе илчĕ. Çав гитлеровецăн хуçалăхĕнче тата вунă тарçă — белоруссем, поляксем, французсем ĕçлетчĕç. Эпир унта тул çуталиччен пуçласа тĕттĕм пулаччĕнех ĕçлеттĕмĕр, выльăхсенчен те начартарах пурăнаттăмăр, ялан выçăччĕ. Кÿршĕри хуçалăхра Яруштаг ятлă нимĕç хĕрарăмĕ патĕнче манăн тантăшăм пурăнатчĕ. Пĕрре вăл чирленĕ те ĕнине вăхăтра сăваймăн. Килхуçи арăмĕ çавăншăн манăн тантăша çуртăн иккĕмĕш хутĕнчен пăрахнă та, çÿçĕнчен тытса, ĕне карти патне сĕтĕрсе кайнă, унта ăна тислĕк çине пăрахнă...

Боецсем пусмăрлăхран хăтăлнă вырăс çыннисем каласа панине тимлĕн, тăшмана çиленсе итлеççĕ. Çав калавсем вĕсен чĕрисене хаярлатаççĕ, юнлă пусмăрçăсене тата ытларах курайми тăваççĕ.

Прусси çĕрĕ çинче кĕрешекен совет чаçĕсем тăшманпа питĕ хаярран çапăçаççĕ. Тăшман вăйлăрах хирĕç тăма пуçланă пулин те, çаплах малалла каяççĕ. Паян Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн çарсем тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ Швиргаллен, Амалиенхоф, Гуддин, Грюнвайтшен пункчĕсене тытса илнĕ.

Капитан М. ЯРОВОЙ.
Хĕвелтухăç Прусси. (ТАСС спецкорĕ).

Планран иртерсе продукци туса кăлараççĕ

КУСЛАВККА, октябрĕн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем производствăра çĕнĕрен çĕнĕ ÿсĕмсем тăваççĕ. Волков юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри М. Жолобов юлташăн бригади комбинатра пĕрремĕш вырăн йышăнать. Вăл Октябрь уйăхĕнчи плана 7 кун малтан пурнăçланă. Халĕ планран иртерсе продукци туса кăларать. Токарь Семашин тата штамповщик Косаченко юлташсем октябрь уйăхĕнчи плана октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарнă. Инструментсен участокĕнче ĕçлекен слесарь А. Комаров юлташ сменăри задание 300 процент ытла тултарнă. Çавăн пекех Мунюков, Алексеев, Селичко, Винокуров юлташсем ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем те ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

В. КАРПОВ.

ОДЕССĂРА ÇĔНĔ ТЕЛЕГРАФА ХУТА ЯНА

Одессăра çĕнĕ телеграф ĕçleme пуçланă. Халиччен унта хулана ирĕке кăларнă малтанхи кунсенче вăхăтлăха тунă телеграф çеç пулнă.

Çĕнĕ телеграфра техника пайне тата вăй паракан хатĕрсене пĕтĕмпех вырнаçтарса çитерне. Халĕ Одесса хули Мускавпа, Киевпа, Днепропетровскпа, Николаевпа, Измаилпа тата Одесса облаçĕн пур районĕсемпе те çирĕп çыхăну тытать.

(ТАСС).

РОСТОВРИ ĔÇÇЫННИСЕМ ХАЙСЕН ХУЛИНЕ ЛАЙĂХЛАТНĂ

140 пин ĕççынни Ростов хулине лайăхлатас тĕлĕшпе икĕ уйăх хушши ĕçленĕ. Вĕсем ĕçленине пула, Ростов хулин сăнĕ халь палăрмаллах улшăнчĕ. Пурăнмалли çуртсен урам енчи стенисене сăрланă, йĕркене кĕртнĕ. Хула хĕррисенче 25 пин тăваткăл метртан ытларах тротуарсем сарнă. Садсемпе парксенче 50 пин йывăç лартнă. Воскресниксенче 3 больницăна, 5 шкула, темиçе пин тăваткăл метр лаптăкĕ чухлĕ пурăнмалли çуртсене юсанă.

Совет Союзĕ тăрăх

Югослави халăхĕсем фашистла захватчиксене хирĕç паттăррăн кĕрешни

Мĕнпур славянсен комитетĕнчи выставка

Октябрĕн 5-мĕшĕнче Мускавра, мĕнпур славянсен комитечĕн пысăк пÿлĕмĕнче Югослави халăхĕсем фашистла захватчиксене хирĕç паттăррăн кĕрешнине кăтартакан выставка уçăлнă.

Выставкăри экспонатсем оккупантсене хирĕç вăрçă сарăлнăçемĕн сарăлса пынине, уйрăм кĕрешекен партизанла отрядсенчен Югослави халăхĕн хăватлă ирĕклĕх çарĕ пĕтĕçсе, çирĕпленсе пынине кăтартаççĕ. Çав çара Иосип Броз-Тито маршал ертсе пырать.

Югослави хулисемпе ялĕсенче оккупантсем мĕнле хуçаланнине кăтартакан фотографи документсем оккупантсене çав ĕçсемшĕн тавăрма чĕнеççĕ. Выставкăра партизансен чи малтан организациленĕ пĕр отрячĕн ÿкерчĕкĕ пур. Çав партизансем—ялти хресченсем. Вĕсен аллинче — хăйсем тунă хĕçпăшалсем. Çав ÿкерчĕкпе юнашарах ирĕклĕх çарĕн 1-мĕш бригадине кăтартакан ÿкерчĕк пур, çав бригада вара тăшмантан тытса илнĕ винтовкăсемпе тата пулеметсемпе хĕçпăшалланнă.

Выставкăри темиçе экспонат Югославин ирĕке кăларнă районĕсенче промышленность тата культура учрежденийĕсем юсанса ура çине тăнине кăтартаççĕ. (ТАСС).

Вырăс халăхĕн чапĕпе мухтавĕн памятникĕ

Бородинори вăрçăпа истори музейне юсаса тепĕр хут уçнă

Мускав çыннисене хăйне уйрăм поезд Бородино хирĕ патне илсе çитерне. Унта, Раевскин чаплă батарейи тăнă вырăнта, вырсарникун, октябрĕн 15-мĕшĕнче, Бородинори вăрçăпа истори юсаса çитернĕ музейне уçнă.

Фашистсем вырăс хĕçпăшалĕн чапĕн çав памятникне тискеррĕн пĕтерсе тăнă. Унта аслă çапăçуран юлнă халь питĕ сайра тĕл пулакан хатĕрсене усранă. Нимĕçсем музейри хаклă япаласене нумайĕшне çухатса янă.

Вырăнти халăх активлăн пулăшнипе музейре ĕçлекенсем вырăс халăхĕн хаклă памятникне юсаса çĕнĕрен йĕркелесе янă, музейрен урăх çĕре илсе кайнă экспонатсене музее каялла тавăрса панă, çав шутра Кутузов лавне, вырăс çарĕн çав вăхăтри тумтирĕсемпе хĕçпăшалĕсене, Верещагин картинисене, вырăссен тата французсен полкĕсен ялавĕсене, орденсене тата авалхи гравюрĕсене тавăрса панă.

Музей 6 çутă залра вырнаçнă. Унта Наполеон çарне аркатса тăкас ĕçре Бородинори çапăçу мĕнле вырăн йышăннине кăтартса паракан çĕнĕ документсем, халиччен сахал çын пĕлнĕ документсем, пур. Музейĕн юлашки пайĕ Хĕрлĕ Çар воинĕсем—Бородино геройĕсен чаплă ывăлĕсем—фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç мĕнле кĕрешнине кăтартать.

Музее уçнă чухне йышлă çынлă митинг пулса иртнĕ. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Перемири çинчен тунă килĕшĕве Румыни мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни

БУХАРЕСТ, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Контроль Комиссийĕн сотрудникĕсем Румынин чылай хулисенче румын оккупанчĕсем Совет Украинипе Совет Молдавийĕнчен илсе кайнă пурлăхсене тупса пыраççĕ. Çапла, акă, Бухарестра «Монополия» ятлă табак фабрикинче совет предприятийĕсенчен турттарса кайнă пар хуранĕсене, моторсене, дизельсене тупнă; Тузла хулинче тăвар фабрикин оборудованине тата румынсем Кишинев хулинче çаратса пухнă нумай станоксемпе машинăсене тупнă. Союзниксен Контроль Комиссийĕ çав пурлăха халех Совет Союзне яма хушнă.

Совет территорийĕсене оккупацилесе тăнă вăхăтра румынсем 3.000 трактор ытла çаратса пухса, хăйсем патне илсе кайнă. Хальхи вăхăтра çав тракторсенчен 2.000 тракторне ытла Союзниксен Контроль Комиссийĕ тупнă. Унсăр пуçне, ытти тĕрлĕ ялхуçалăх инвентарĕ нумай тупнă. Комисси Румыни влаçĕсене Совет Союзĕнчен илсе кайнă тракторсемпе ялхуçалăх машинисене васкаса юсама тата вĕсене Совет Союзне ăсатма хушнă. Комисси хушнине румынсем халь пурнăçа кĕртеççĕ.

Анчах та румынсен хăшпĕр учрежденийĕсем Килĕшĕвĕн совет пурлăхне каялла тавăрса памалли çинчен калакан пайне пурнăçа кĕртмесĕр хăварма тăрăшаççĕ. Çав пурлăха Совет Союзне тавăрса парасран пытарса хăварас шутпа, станоксемпе ытти япаласем çинчи совет маркисемпе ярлăкĕсене пĕтерсе тăкнă, çав пурлăхсен документчĕсене çунтарса янă т. ыт. те. Союзниксен Контроль Комиссийĕ Румыни правительствине çавăн пек тунăшăн айăплă çынсене наказани пама тата малашне ун пек хăтланма чарма хушнă.

Румыни правительстви государство аппаратне фашистла çынсенчен çителĕклĕ тасатмасть. Вăрçă преступникĕсенчен хăшне-пĕрне тытса хупни çинчен пĕлтернĕччĕ. Вĕсемсĕр пуçне, Румыни влаçĕсем нумаях пулмасть пĕтĕм Румынийĕпе румынсен 500 фашистне-железногвардеецне ытла тытса хупнă, анчах та çавăнтан ытларах çын, çав шутра вĕсен чылай руководителĕсем, халь те ирĕкре çÿреççĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла калана:

Шельдăран кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Кадзанд тата Зейдзанде ятлă пунктсене тытса илнĕ. Зейд-Бевеландра союзниксен çарĕсем Гус хулине ирĕке кăларнă та Гудекенскерке районĕнче авиадесант çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Тинĕс çинчен аннă десант хăйĕн плацдармне хĕвеланăç еннелле аслăлатнă. Маас шывĕнчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем пĕтĕм фронт тăршшĕпех малалла кайнă. Хĕвелтухăç енче наступлени туса пыракан çарсем Бредпа Розендааль хулисем хушшинчи çула татнă.

Тильбург хулинчен çурçĕртерехри районра союзниксен çарĕсем Лоон-оп-Занд хулинчен темиçе миля çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре тăраççĕ. Истребитель-бомбардировщиксем Амерсфортпа Зволль хулисем хушшинчи чугун çулпа çÿрессине пĕтерсе лартнă. Венло районĕнче тата Голланди секторĕн тылĕнче ытти вырăнсенче те çÿреме чарса лартнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс тавращĕнче

ЛОНДОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавращĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла калана:

Италире патрульсем активлăн кĕрешнĕ.

Грецире октябрĕн 29-мĕшĕнче Çурçĕр Грецири Козани хулинчен хĕвеланăçнерехре кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн çав хулана Англи çарĕсем тытса илнĕ, тăшман вĕсене вăйлă хирĕç тăнă. Тăшман халь çурçĕр еннелле чакса пырать. Союзниксен малти чаçĕсем ăна хыçранах хăваласа пыраççĕ. «Спитфайр» йышши самолетсем Салоники районĕнчи чугун çул транспортне пыра-пыра тапăннă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк мар соединенийĕ, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, Кăнтăр Германири объектсене тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс тавращĕнчи авиаци 700 вĕçеве яхăн тунă.

Югославири çапăçусем

ЮГОСЛАВИ ÇАРĔСЕМ СПЛИТ ХУЛИПЕ ПОРТНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

БЕЛГРАД, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Далмацире наступлени туса пыракан Югослави чаçĕсем виçĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн Сплит хулипе портне ирĕке кăларнă. Çав хула нимĕçсен Югослави çĕрĕнчи Адриатика тинĕс хĕрринчи питĕх те паха пункчĕ пулнă. Ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем çавăн пекех тата Синь, Дивуле, Соли, Каштель, Клис тата Трогир хулисене йышăннă.

ГЕРМАНИРИ ПОРАЖЕНИЛЛЕ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла хаçатсем час-часах пораженилле шухăш-кăмăлсемшĕн тата государствăна хирĕç калаçнăшăн асаплантарса вĕлерни çинчен пĕлтерме пуçларĕç. Çапла, гитлеровецсен «Любекер фольксботе» ятлă хаçачĕ октябрĕн 18-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: «Лейпциг çыннине — 62 çулхи Рихард Пейкерта государствăна хирĕç калаçнăшăн пĕрре асăрхаттарнă пулнă. Анчах та вăл çавăн хыççăн пĕринче кинора сеанс вăхăтĕнче пĕр паллă мар хĕрарăмпа калаçма тытăннă. Вĕсене çав хĕрарăмăн 14 çулхи ывăлĕ итлесе ларнă. Рихард Пейкерт çав хĕрарăма çапла каланă: маншăн пулсан, Германи поражени тÿсни лайăхрах пулмалла, тенĕ. Пейкерт çав сăмахсене хытă каланă, вăл каланине кино курма пынă ытти çынсем те аванах илтнĕ».

Хаçат малалла çав Пейкерта асаплантарса вĕлермелле туни çинчен пĕлтерет.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ФИЛИППИН УТРАВĔСЕМ ÇИНЧИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешуллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет:

Лейте утравĕ çинче (Филиппин утравĕсем) Америка çарĕсем пур участоксенче те малалла кайнă. Японин 16-мĕш дивизине пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă.

Самар утравĕ çинче (Филиппин утравĕсем) американецсен пĕрремĕш дивизийĕн чаçĕсем çав утравăн тĕп хули пулса тăракан Катбалоган хулине туртса илсе, хуларан 9 миля хĕвеланăçнелле малалла кайнă. Халĕ Америка çарĕсем Самар утравне пĕтĕмĕшпех контроллесе тăраççĕ.

Китайри вăрçă

ЯПОНИ ÇАРĔСЕМ ГУЙЛИН ХУЛИ ÇИНЕ НАСТУПЛЕНИ ТУНИ

ЧУНЦИН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Китай командованийĕ пĕлтерне. тăрăх, японецсем октябрĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа Хунань провинцийĕнчен Гуанси провинцине каякан чугун çул тăрăх хĕвеланăçнелле куçма темиçе хут та хăтланса пăхнă. Çав чугун çул çинче Гуанси провинцин столици Гуйлин хули ларать.

Октябрĕн 27-мĕшĕнче ирхине японецсем Гуйлин çине вăйлă наступлени пуçласа янă. Октябрĕн 28-мĕшĕнче Китай командованийĕ Япони çарĕсен малти колоннисем Гуйлин хулипе пĕрлешсе кайнă ялсем патне çитни çинчен пĕлтерне. Унта халь хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00770. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.